81-26



АРХИП АЛЕКСАНДРОВ

# ВĂРМАН АЧИСЕМ



АРХИП АЛЕКСАНДРОВ

# ВӐРМАН АЧИСЕМ

*Калавсем*



Чӑваш кӗнеке издательстви. Шупашкар—1981

# Вожатăйăн пĕчĕк тусĕсем



Çуллахи каникула тухнăранпах ĕмĕтленсе пурăннă ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрейменĕ Нинăн. «Вăрçă!.. Фашистла Германи пирĕн çине ирсĕррĕн тапăннă»,— пĕлтерчĕç пĕр ирхине. Тăваттăмĕш класран вĕренсе тухнă хĕрачан пионер лагерьне каймаллаччĕ, анчах халь ĕнтĕ ун çинчен шутламалли те çук. Вăйпитти арçынсем, вĕсен шутĕнчех Нина ашшĕ те, фронта кайса пĕтрĕç. Хĕрарăмсем Великая юханшыв хĕррипе окопсем чавăççĕ.

Фронт çывăхĕнчи хула пурнăçĕ тĕпренех улшăнчĕ. Урамра ытларах çар çыннисене тĕл пулатăн. Нинăсенчен инçех мар, хула хĕррине вырнаçнă районти больницăна, час-часах хĕрлĕ хĕреслĕ автомашинăсем пыра-пыра кĕреççĕ. Шурă халатлă, пилотка тăхăннă хĕрарăмсем бинтпа чĕркесе пĕтернĕ суранланнă çынсене наçилкка çине вырттарса палатăсене иле-иле каяççĕ.

# Вăрман ачи




Пирĕн партизансем вунвиçĕ çулхи Васьăна вăрманта тупса отряда илсе пычĕç. Вăл партизансен лагерьне шыранă-мĕн. Анчах асар-писер çил-тăман тухнă та, ача аташса кайнă. Çапла вара, вăл пĕр талăк хушши вăрманта çухалса çÿренĕ. Çÿренĕ-çÿренĕ те, вăйĕ пĕтсе çитнипе пулĕ, пĕр тунката çумне таянса, çавăнтах тĕлĕрсе кайнă...

Отряда пырсанах, Вася йывăр чирлесе выртрĕ. Ун чухне эпир Пысăк Çĕрпе çыхăну тытайманччĕ-ха. Хамăрăн радиостанци те çукчĕ. Аманнисене е сывмаррисене партизансен «госпиталĕнчех» сывататтăмăр. Вася унта эрне ытла ним пĕлми йывăр выртрĕ. Хытă шăннипе унăн ÿпки шыçнă. Отрядри тухтăр Лидия Семеновна тăрăшнипе кăна вăл вилĕмрен çăлăнса юлчĕ.

Партизансем тăлăх ачана кашниех ăшă сăмах каласа йăпатрĕç, унăн йывăр хуйхине епле те пулин çă-

# Тав



Эпир виççĕн. Мостовой, Кубань тăрăхĕнчи казак, вăрçăччен уй-хир бригадирĕ пулса ĕçленĕ. Тепри — Ленинградри рабочи — Щербенев. Виççĕмĕшĕ эпĕ — Атăл çинчи чăваш.

Отряд командирĕ пире Каменка ятлă пысăк салара вырнаçнă фашистсен вăйне пĕлме хушрĕ. Пирĕн тăшмана курăнмалла мар. Салара миçе салтак тăнине, мĕнпе хĕçпăшалланнине, дозорсем ăçта вырнаçнине тĕрĕс пĕлсе таврăнмалла.

Эпир Каменка таврашĕнче иккĕмĕш кун çӳретпĕр ĕнтĕ. Ыран каçхине задание пурнăçлани çинчен командира çитсе пĕлтермелле.

Каменка тăшман тылне фронтпа çыхăнтаракан çул çинче ларать. Ăна пур енчен те вăрман хупăрласа илнĕ. Сала варрипе пĕчĕкех мар шыв юхса иртет. Ун урлă хывнă кĕпере тăшман уйрăмах хытă хураллать. Вăл юханшыв çинчи пĕртен-пĕр шанчăклă кĕпер. Ăна

# Толя-партизан



Осиновка — пĕчĕк ял. Ана виçĕ енчен, пысăк хыпкăчпа хĕстерсе лартнă пек, хыр вăрманĕ хупăрласа тăрать. Ял айккипе Мелкая ятлă пĕчĕк шыв юхса иртет. Çуркуннепе кĕркунне юханшыв çырмасенчен те тухса каять. Çулла вара ăшăхланса юлать. Мелкая леш енче тӳрем улăх сарăлса выртать. Халĕ вăл симĕс курăкпа витĕннĕ.

Осиновкăна эпир ирхине çитрĕмĕр. Хĕвел тухнă пулин те, ял çине унăн янкăр çути ӳкмен-ха. Ватă хырсен тăррисенче кăна ылтăн тĕслĕ çутă пайăркисем ялкăшса выляççĕ. Вĕсем туратран турат çине сиккеленĕ пек курăнаççĕ.

— Питех те илемлĕ вырăн. Чăн-чăн курорт кунта,— тет кĕреçе сухаллă партизан, тутлăн анасласа. Вăл ытараймн илемлĕ çурхи çанталăка пăхса çаврăнать те кавир пек çăра курăк çине тăсăлса выртать.

— Сывлăшĕ... мĕне тăрать... Виçĕ талăк çывăрман

# Хӑрах куҫ



Отряд командирӗ мана Харченкопа пӗрле хӑй патне чӗнтерчӗ. Харченко — партизансен отрядӗнче ҫӗнӗ ҫын. Вӑл пирӗн пата пӗр-икӗ эрне каярах кӑна, фашистсен лагерӗнчен хӑтарнӑ хыҫҫӑн, пычӗ.

— Сире паян пӗр пысӑк задани паратӑп. Эсӗ асли пулатӑн,— терӗ командир, ман ҫине пӑхса.

— Итлетӗп сире!— терӗм эпӗ.

— Харченко юлташшӑн ку пӗрремӗш задани пулать,— малалла тӑсрӗ командир. Вӑл Харченко ҫине пӑхса илчӗ те:— Килӗр кунтарах. Акӑ, Озерки ялӗ. Питех те хитре вӑл. Эсӗ кунта пулса курнӑ-и?— тесе ыйтрӗ манран.

— Ҫук, тӳр килмен. Унта фашистсен карательнӑй отрячӗ тӑрать,— терӗм эпӗ.

— Тӗрӗс. Икҫӗр ҫынна яхӑн. Староста кам унта?

— Хӑрах Куҫ.

— Ҫапла, Хӑрах Куҫ. Ӑна ыран ирччен «ҫӳлти пат-

# Сигнал вăрттăнлăхĕ



Миша машинăсем кĕрленĕ шавпа вăранса кайрĕ.

— Чуниллисем, хĕвел тухиччĕнех персе çитрĕç. Тем пулнă ĕнтĕ,— терĕ унăн амăшĕ, чӳрече умĕнчен пăрăнса.

— Фашистсем-и?

— Камсем пулччăр тата...— аллине сулчĕ амăшĕ.— Юлашки чăх-чĕпе пуçтарса кайма килчĕç пуль ĕнтĕ.

«Сигнал тухса тăратмалла»,— çиçсе илчĕ Миша пуçĕнче. Вăл вырăн çинчен йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те çенĕке çăвăнма тухрĕ. Çав вăхăтра кил хушши алăкне хытă шаккани илтĕнчĕ.

— Тухса уç хăвăртрах, ывăлăм. Тем курса ларăпăр тата,— терĕ амăшĕ, пӳрт алăкне уçса.

Миша питне çуса пĕтермесĕрех алăк уçма тухса чупрĕ.

— Ком! Ком! Марш шкула!— урамалла тĕртсех

# Аслашшĕпе мăнуккĕ



Борки ялĕнче пурĕ те вунултă кил кăна. Вăл вăрман хӳттине пытанса ларнă. Анкарти хыçне тухатăн — вăрман пуçланать, укăлчаран иртетĕн — каллех вăрмана лекетĕн. Кăнтăр енче вара пысăках мар уйсем, çарансем, уçланкăсем пур. Вăл уйсене колхозниксем тырă-пулă акса тума вăрман хăртса тунă. Çуллахи вăхăтра Боркине пĕртен-пĕр çул пырса кĕрет. Вăл ялтах вĕçленет. Малалла каймасть. Вăрман леш енче шурлăх пуçланать. Вуншар километра тăсăлать вăл хăшпĕр тĕлте. Шурлăха çулла лашапа мар, çуран çын та ура ярса пусма хăрать. Чĕрренех ĕмсе çăтать иккен вăл шурлăх чĕрчуна.

Ялти хăюллă сунарçăсем çак çăткăн шурлăх урлă та çул хывнă-мĕн. Вăл вăрттăн сукмака ялти ватă çынсемпе партизансен разведчикĕсемсĕр пуçне урăх никамах та пĕлмест.

Утпа çӳремелли пĕртен-пĕр çула партизансем